# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНĔ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ХАЛĂХА ТАТА ТЕРРИТОРИСЕНЕ ÇУТ ÇАНТАЛĂКПА ТЕХНОГЕН СĂЛТАВĔСЕМПЕ ПУЛАКАН МАЙСĂР ЛАРУ-ТĂРУРАН ХӲТĔЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ*
*2023 çулхи пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи халăха тата территорисене çут çанталăкпа техноген сăлтавĕсемпе пулакан майсăр лару-тăруран хӳтĕлесси çинчен" 1996 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 7 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1996, 10 №; 2000, 37 №; 2002, 46 №; 2004, 61 №; 2007, 74 №; 2009, 80 №; 2010, 87 №; 2011, 90 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; 2014, 12 №; 2015, 10 №; 2016, 3 №; "Республика" хаçат, 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, утă уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 10 статьян 1-мĕш пункчĕн вун çиччĕмĕш абзацне "Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан," сăмахсем хыççăн "Чăваш Республикин территорине çитсе вырнаçнă ют çĕршыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене (малалла – ют çĕршыв гражданĕсем тата гражданлăхсăр çынсем)" сăмахсем хушса хурас;

2) IV сыпăк ятне "Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан," сăмахсем хыççăн "ют çĕршыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене" сăмахсем хушса хурас;

3) 19 статьяра:

а) ятне "Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан," сăмахсем хыççăн "ют çĕршыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене" сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса $1^{1}$-мĕш пункт хушса хурас:

"$1^{1}$. Ют çĕршыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан гражданĕсен çак статьян 1-мĕш пунктĕнче кăтартнă прависем Федераци саккунĕн 18-мĕш статйин положенийĕсене шута илнĕ май пырса тивеççĕ.";

б) 2-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"2. Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан гражданĕсем, ют çĕршыв гражданĕсем тата гражданлăхсăр çынсем валли компенсацисемпе социаллă гарантисем уйăрса памалли йĕркене тата условисене, вĕсен тĕсĕсемпе виçисене çак статьян 1-мĕш тата $1^{1}$-мĕш пункчĕсемпе килĕшÿллĕн Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртаççĕ.";

4) 25 статьян тăваттăмĕш абзацне "Раççей Федерацийĕн гражданĕсене" сăмахсем хыççăн ", ют çĕршыв гражданĕсене тата гражданлăхсăр çынсене" сăмахсем хушса хурас.

**2 статья**

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕ
14 №